К84.89(=Чув)
К27
Ч-50330

Марина Карягина

# Чĕвĕлти чĕкеç чĕппи



Национальная библиотека ЧР
4-050330

Обязат. экз.
К84.89(=Чув)
К 27

Марина Карягина

# Чӗвӗлти чӗкеҫ чӗппи

Сăвăсем

Ӳнерçи
*Наталия Васильева*



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2020

# МАНĂН ЫТАРАЙМИ ПĔЧĔК ТУСĂМ!

«Чĕвĕлти чĕкеç чĕппи» — ыттисенчен урăхларах кĕнеке, унти сăвăсем пурте пĕр сас паллинчен пуçланакан сăмахсенчен тăраççĕ. Ку ĕнтĕ пирĕн чĕлхе çав тери пуяннине ĕнентерет.

Кĕнекере пурĕ çирĕм тăвата сас паллинчен пуçланакан хайлав. Чăваш алфавитĕнче миçе сас палличчĕ? Тĕрĕс, вăтăр çиччĕ. «Апла тепĕр вун виçĕ сăвви ăçта çухалса юлнă-ши?» — тесе тĕлĕнетĕн пулĕ. Çук, вĕсем ниçта та тарса пытанман. Хăвах шухăшласа пăх-ха, **ъ, ь** паллăсемпе пуçланакан сăмах пулма пултарать-и? Çук, пулма пултараймасть. Нихăш чĕлхере те. **Ъ, ь** — сассăр паллăсем. Чĕмсĕрскерсем сăмах варринче е вĕçĕнче кăна тăраяççĕ.

Çавăн пекех чăваш чĕлхинче ***б, г, д, ж, з, р, ф, ц, щ*** хупă тата ***ё, о*** уçă сасăсем вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсен пуçламăшĕнче çеç тĕл пулаççĕ. Кашни чĕлхен хăйĕн уйрăмлăхĕсем пур çав: тĕслĕхрен, вырăс чĕлхинче **ы** сас паллинчен пуçланакан сăмах пачах çук, чăвашсен вара — ирĕклĕн сăвă-калав пуçласа çырмалăхах.

Кĕнекере тата тепĕр уйрăмлăх та пур: кашни сăвă çумĕнче — ыйтусем. Вĕсем авторпа пĕрле шухăшлама йыхравлаççĕ, хайлава аванрах ăнланма пулăшаççĕ.

Ман юратнă тусăм! Чăваш чĕлхи — илемлĕ, çепĕç, янăравлă, пуян, чĕрене пыракан чĕлхе. Унпа пирĕн мăн-мăн асатте-асаннесем пиншер çул каяллах, сĕм авалхи вăхăтсенчех, пулленĕ, халĕ те янраттаратпăр кăна: юрăсем юрлатпăр, сăвăсем вулатпăр. Чăвашла юратса калаçатпăр, интернетра тăван чĕлхепе çыратпăр, вулатпăр. Вырăсла та пĕлетпĕр, ют çĕршыв чĕлхисене те вĕренетпĕр. Тăван чĕлхене хисеплесе çитĕнекен ача тăван çĕршыва ытларах юратать, ваттисене сума сăвать. Аслисен пилне тивĕç пулса ӳс, манăн пĕчĕк тусăм. Санра — шанчăк! Пысăк пул!

*Марина аппу.*

4-50330
Национальная библиотека
Чувашской Республики



## АМАННĂ АНЧĂК.

— Атте! Анне! Аслă аппа! —
Аптăратрăм асаппа, —
Анкартинче — аманнă анчăк,
Анаталла аран-аран анчĕ...
Аманнă анчăкпа
Аттем ачашшăн аппаланчĕ,
Аннем апат антарчĕ,
Аппа ашпа астарчĕ —
Анчăкăмăр аванланчĕ!

**Сирĕн килте йытă пур-и?**
**Ун çинчен юлташусене каласа пар-ха.**

## ӐМӐРТКАЙӐКПА ӐСАН.

Ӑсан
Ӑмӑрткайӑкпа ӑмӑртасшӑн.
— Ӑнкараймастӑп: ӑҫтан
Ӑмсанмалла ӑста,
Ӑратлӑ Ӑмӑрткайӑк, —
Ӑшталанать Ӑсан.
— Ӑслаккайӑм,
Ӑса ӑҫтан ӑсайӑн...
Ӑмма-ха ӑмсанан?
Ӑшӑх ӑш-чиклӗ-мӗн Ӑсан, —
Ӑсчахланать Ӑман. —
Ӑмӑрткайӑк ӑнне
Ӑнланайманнине...
— Ӑмӑртайми ӑнӑҫусӑр-тӑр, —
Ӑнлантарасшӑн Ӑтӑр.
— Ӑнман! — ӑмӑрланать Ӑсан.
Ӑнт ӑнсӑртран ӑнтарайсан!..

Ӑнланар ӑшӑрханӑ Ӑсана.
Ӑмӑрткайӑк ӑшшӑн-ӑшшӑн
Ӑсатать ӑна:
— Ӑсанӑм, ӑраскал ӑрасна...
— Ӑмсанатӑп ӑсна!
— Ӑнтӑлсан-ӑнтӑлсан
Ӑсталанӗ Ӑсан.

Ӑнтӑлмалла —
Ӑмӑрту ӑҫта-тӑр ӑнмалла!

**Мӗнле шутлатӑн, ӑнӑҫу тӑрӑшмасӑр пулать-и?**



## ВĔРШĔНПЕ ВĔРЕНЕ.

Вĕршĕне
Вĕренен вĕлтĕркки вĕчĕхтернĕ:
Вĕршĕнле вирхĕнсе вĕçесшĕн —
Вĕршĕне витлесшĕн!

Вара
Варкăшпа вĕлкĕшекен вăрра,
Вĕренен вĕлтĕркке вăррине,
Вăл вăрттăн вăрланă,
Вăрманта,
Вăрăм варта,
Вашмăкрах вырăна
Варăнтарнă.

Вăрах выртнă вĕрене вăрри…

Вăрлакан Вирĕмре
Вăрмана васканă.
Вăрлăх вырăнне…
Вĕрене!
Вуллине
Вĕлтĕркки варкăштарнă!

**Халăхра «Темле путарсан та ырри çиеле тапса тухать» тени çак сăвăри тĕп шухăшпа тӳр килет-и?**





## ЕПЛЕРЕХ!

— Екким еплерех?
— Ерипен.
— Елен еплерех?
— Ерипен.
— Евкен епле? Ерипенех-и?
— Еплерех!

**Сӑвӑри «еплерех» сӑмах тӗрлӗ саспа каласан пӗлтерӗшне мӗнле улӑштарнине асӑрхарӑн-и?**

## ЁММЕН ЁНЕШКЕ.

Ёнелте ёнес Ёне
Ёнертенпе ёнёрет:
— Ёнешкем ёммест-çке, Ёнчё...
Ёшкёнсе ёшентём ёнтё...

Ёненетёп Ёнене,
Ёнипе ёнешкине...

Ёшелентём, ёсёклерём,
Ёнтрёкчен — ёçчен! — ёçлерём:
— Ёнтёркенё ёнешке
Ёмкёч ёмекенччё-çке!

(Ёмиччен ёмкёчпеле
Ёçрё ёçтеркёчпеле.)
Ёнчё, Ёнчё! Ёлкkенленчё!
Ёмётрилле ёретленчё!
— Ёшнене ёлкёрмелле,
Ёнчё, ёрёхтермелле! —

Ёнентертём. Ёненмесёр!
Ёрёхтертём ёхлетмесёр.

Ёнтё Ёнчё ёрёхет —
Ёнешкешён ёрехет!
— Ёмёлкеччё... Ёрехмет! —
Ёнел Ёни ёнёрлет.



**Ачасем, эсир килти выльăх-чĕрлĕхе, сăмахран, йытă е кушака, чăвашла ят паратăр-и? Пăрăва е путеке ĕмкĕч ĕмтерсе курнă-и?**

## ИТЛЕМЕН ИЛЛЕ.

Имшеркке иккен Илле —
Иллене имлемелле.
— Ил-ха, ил ик-виç икерчĕ!
Илли илеймест — именчĕк.
— Икерчисем иçĕмпе,
Илĕртеççĕ илемпе! —
Илтмест имĕш Илюшĕ,
Илтсессĕнех илĕ-ши?
(Иксĕлмерĕ икерчĕ —
Ир ириса иленчĕ...)
Именнипе илмест-ши?
Иртĕннипе илмест-ши?
И-и, итлемен Иллене
Итлеттерейĕпĕр-ши?

**Апат тиркекен, тутлă çимĕçе иленнĕ ачана аслисем мĕн теççĕ? Пылак нумай çини усăллă-и?**



## ЙӐЛӐНТАРМӐШ ЙӐВАН.

— Йӑлӑхтартӑн йӑлт, йӑран!
Йӑраланан-йӑраланан... —
Йӑлӑнтарнӑччӗ Йӑван,
Йӑваннӑччӗ —
Йӑвача йӑвалакан
Йӑмӑк йӑпӑшт йӑпшӑнчӗ:
— Йӗкӗт, йӑнӑш йӗрмӗшен,
Йӗтӗрлес йӳтетмӗше!

— Йысна, йӑмӑк йӗкӗлтет!
— Йывӑҫ йӑхӗ — йӗкелте... —
Йӳҫҫӗн йӑпатать йысна. —
Йышӑнӗҫ-и-ха йышна
Йӑнӑшсассӑн, йынӑшсассӑн —
Йӑрансенчен йӑлӑхсассӑн?..
Йӑван — йӑмшак йӑхӗнчен-и?
«Йывӑр!» — йӑхун йӑлинче-и?
Йӗркеллех-и йӗнчени,
Йӗре йӗрне йӗрлени?
Йӑлӑхакан йӑлаapproximately —
Йӑлӑхатех йӑваран...

Йӑшнӑ Йӑван йӑшӑлтатрӗ —
Йӳрӗк йыттӑм йӑпӑлтатрӗ:
Йӑтать йӑва Йӑваншӑн!
Йӑрӑ Йӑван — йӑраншӑн!





Йăскăн йыттăм йăпăшах.
Йăмăк йăл-йăл йăлкăшать:
— Йышăнатпăрах йыша
Йăпар йышши «йăваша»!

**Эсĕ аслисене пахчара мĕн туса пулăшатăн?**
**Мĕнле шутлатăн, йăран çумласси**
**Йăван шухăшланă пек, чăнах та, йăлăхтаракан**
**пĕр усăсăр ĕç-ши?**



## КЛОУН.

Каншел кӗрлет:
— Клуба клоун килет!
— Кайса куратпӑр-и?
— Кайса курасчӗ!
— Канмалли кун-и?
— Кӗҫӗрех килет!
— Килтӗрех!

Клуба каяс килнӗрен
Капӑр кӗпе килӗрен!

Килсе кӗчӗ клоун.
Каснӑ-лартнӑ кавӑн!
Куҫне-пуҫне кӑвакартнӑ,
Кӑлтӑрмачӗ картлӑ-картлӑ.
Каҫса кайса кулать,
Купӑс калать!




**Эсӗ циркра пулса курнӑ-и? Ху курнӑ клоун ҫинчен каласа пар-ха.**



## КЁРХИ КУН.

Кĕтӳçсем — канура,
Кураксем — кăнтăра,
Курăксем кушăхса кĕмĕлленчĕç.
Кăчăр-кăчăр каçсем,
Кӳршĕ-аршă кичем,
Карчăксем киленсе калаçмаççĕ.
Кунĕсем — кĕп-кĕске,
Кӳлĕсем — куç кĕски:
Конькине кăларас кăмăл кĕчĕ!

**Эсĕ çутçанталăка сăнама юрататăн-и? Кĕркуннен тата мĕнлерех уйрăмлăхсем пур-ши? Сăнласа пар. Мĕншĕн çӳхе пăр çинче конькипе ярăнма юрамасть?**



## КУЛМАН КУЛЯ.

Кирек кама култар —
Кулать,
Куля кулмасть.
(Калăпăр,
Кӳрши кавлет кулачă,
Кăшт кукăртса калать:
«Кульачă».
Каçса кайса кулатчĕç —
Куля кулмастчĕ.
Кулян кӳрши калашле,
Кăлăхахчĕ калаçни...)



Камит калать Кириле —
Кун каҫа кӗмест киле,
Кӗшӗлтетет купара:
«Килӗм-ҫуртӑм Кубӑра!»
Каллӗ-маллӗ кумкалать,
Кӑлтӑрмачӑн кускалать:
Култарасшӑн Куляна!
Кулманнишӗн кулянать —
Кули кулмасть!
Камитҫӗпе кӑсӑкланмасть...
Кулян куккӑш калашле,
Кулман Куля — кулӑшла!

Куля кулнине
Куртӑм-куртӑмах!
Качакана кӗртрӗм картана,
Кӗреп киле.
Курап — Куля килет:
Кӑсӑруксӑр карттуспа,
Кӗске кӗпи кӗрен —
Кулса килет... кӗнекерен!
Курӑр-ха,
Картинккасӑр кӗнеке кӑна
Култараять-мӗн Куляна!



**Сирӗн хушӑра Куля пек ыттисенчен уйрӑлса тӑракан ача пур-и? Эсӗ ӑна ӑнланма, унпа туслӑ пулма тӑрӑшатӑн-и?**
**«Картинккасӑр кӗнеке» кӑна култарма пултаракан Куля сана мӗнлерех ача пек туйӑнать?**



## ЛАЙĂХ ЛАША.

Лешкас лаши лайăх-ши?
Леçрĕ лавккана лавçи:
Лакăмсерен лӳшкенет!
Лăркаттарчĕ лавçине.
Лапкас лаши лапăсти,
Лашманкассен — лакăшти.
Лапракассен — ланккама,
Лакса ларчĕ лапрана.
Лешĕ лакса лармĕччĕ —
Лăчăр-лачăр ларкăчĕ:
Лăчăртатать лексенех!
Лăплантартăм лавçине:
«Лаши лайăх! Лутрарах,
Лӳппер лаша — лăпкăрах:
Лавçă лăп-лăп лăпкасан
Латсăр лайăх-мĕн лаша!»

**«Юратса пăхсан начарри те лайăххăн курăнать, тиркесе пăхсан лайăххи те начаррăн курăнать» текен шухăша ăнлантарса пар.**






# МЕРЧЕН МӐЙӐХ МАН МӐРККА.

Мӑр-мӑр-мӑр-р... мӑрлать Мӑркка.
— Ма мӑртлатрӑн, мӑштӑрккам? —
Мӑкӑртатрӑм малтанах
Мухта-мухта Мӑрккана. —

Мӑнкун матти мӑнтӑркка,
Мерчен мӑйӑх — ман Мӑркка! —
Мамӑк минтер майларӑм,
Мӑрккам майпен мӑйларӗ...

— Ма макӑран, мӑнтарӑн? —
Мӗнле майпа мантарӑн...
— Мӑр-мӑр Мӑркку — мӑранкка, —
Мӗскӗннӗн мӑрлать Мӑркка.

— Маттур Мӑркка — маттурах,
Мӑран мӗнне мантӑрах!
Мӑштӑркка мар, мӑнаҫлӑ,
Манӑн Мӑркка — малашлӑ!

**Мӑркка хуҫине мӗншӗн кӳреннӗ?**
**Тантӑшусене савӑнтаракан**
**сӑмахсем кала.**



## НАЙĂЛТИ НАÇТАÇÇИ.

Няххи нях-нях! няхлатать,
Нартти нарт-нарт! нартлатать,
Нăрăк! нăрклатать Нўркка,
Нăшăклатать — нăшăлкка.

Нăйăлтатать нăйăлти,
Нăрăлтатать нăрăлти.
Нăрăлтиййĕ нăрă-ши?
Нăйăлтиййĕ — Наçтаççи!

**Лаша мĕнле кĕçенет?**
**Сурăх мĕнле макăрать?**
**Вăкăр мĕнле мĕкĕрет?**
**Хур мĕнле какалать?**
**Автан чăхсене тулă çиме мĕнле йыхăрать?**
**Пĕчĕк йăмăкăр е шăллăр мĕнле йĕрет?**



## ПИЛЕШПЕЛЕ ПАЛАН.

Паян
Пилешпеле Палан
Пăшăл пăтти пĕçерчĕç.
Паттăрланать пĕри:
— Пилеш пускилĕм,
Палан пекки пурах-и пирĕн?
Палан, пĕлетĕр, пахаран паха,
Пĕвĕм-сиййĕме пăх-ха!
— Питех пăхмалăх пур-им?
Пилеш пылне пĕлмелĕх пурăн!
— Палан пăтти пылак-тăр пылпалан!
— Пĕлеççĕ! —
Пат пӳлет Пилешĕ.
— Пиçем-ха... — парăнмасть Палан.
— Пăртакçă пысăклан!
Пĕчĕккĕлле патша пекех палкан.
Пылакпала пăтраштарсан
Палан пулайĕччĕ пилеш!
— Питлеш-питлеш...
Пилеш пĕвне пăхмалăх пур-ши?
— Пулмасăр! Пĕвĕм-сиййĕм — пурçăн!
«Пахаран пахи»
Питне-куçне пĕркелентерчĕ.
— Патак!..
Пĕлмелле пăртак:
Пелĕш пĕçермеççĕ пилешрен!
— Пĕлмĕше перен...



4-50330
Национальная библиотека
Чувашской Республики



Парӑнтарасшӑн пӗр-пӗрне
Пайтах
Паврарӗҫ Пилешпе Палан.

Пӗлекенсем пӗлеҫҫӗ:
Пиҫет Пилешӗ,
Палан пӗкет пӗвне:
Пилеш-палан пуриншӗн —
Пахаран паха парне!

Пӑх, пӗр Пӑлан
Пыра парать пуракпалан.

**Пилешпе Палан хушшинчи тавлашу мӗнле сӑмахран пуҫланнӑ? Мӗнле шутлатӑн, хӑвна ху мухтани килӗшӳллӗ-и?**

## САЛАМ САПАКИ.

Сылтăмра — сатуррисем,
Сулахайра — сапăррисем.
Салам сăвви сăвăлатăп,
Сарă салма салататăп:
Сана — селĕм салам,
Сана — сăпай салам,
Сана — сумлă салам,
Сана — сиплĕ салам,
Сана — сăйлă салам!
Сирте — салам сапаки,
Салхуллисем савăк-и?
Сике-сике савăнар,
Савăнăçлăн саланар!

**Эсир ушкăнпа мĕнле савăнăçлă вăйăсем вылятăр?**



# ÇУРХИ ÇУТÇАНТАЛĂК.

Çĕмĕрт çулçи çумăра
Çапла çыру çырать:
«Çулла çитет — çумăрĕ çуккă...
Çитĕнĕ-ши çырлам
Çупкăм-çупкăм!..»

Çум çаккисем
Çуйхашса çӳретпĕр:
«Çумăр, çу-ха!
Çумăр, çу!
Çупа çăкăр çитереп!»

Çимĕк çитеспе
Çумăр çурĕ-çурех!
Çиçĕм çиçет,
Çаврăçил çаврăнать —
Çавăрттарать çӳп-çапа!
Çумăр çăвать, çăвать!
Çуртсене, çынсене çутатать,
Çăвать — çĕнетет!
Çĕре çемçетет —
Çупа çăкăр çиесшĕн!

Çеçкесем çутă-çутă,
Çулçăсем çăтăл-çатăл,
Çерçисем, çу-и çакă?
Çĕмĕртсем, çу-и çакă?

Çумăр çăвать!
Çĕмĕрет çулсене!
Çумăр çинче çӳретпĕр —
Çупа çăкăр çиетпĕр.



Çумăр, çырлах!
Çулла çийĕпĕр-ха çырла.
Çупкăм-çупкăм
Çĕмĕрт çырли!

**Çурхи илемлĕ çутçанталăка эсĕ мĕнле сăнласа панă пулăттăн? Çутçанталăк пулăмĕсемпе калаçмалли тата мĕнле йыхрав такмакĕсем пĕлетĕн?**



## ТĔКĔР ТАМАШИ.

«Тĕкĕр», «тĕкĕр» тенĕрен
Тĕкĕр тени тĕрлĕрен:
Тĕлĕнсе тăратăп —
Тӳрех тĕлĕненçи тăвать,
Тӳрленсе тăратăп —
Туххăм тӳрлененçи тăвать,
Тĕлĕрем-ха — тĕкĕр те
Тĕлĕк тĕлленсе тăрать!

Тилмĕрсессĕн — тилмĕрĕ,
Тилĕрсессĕн — тилĕрĕ...
Тĕлĕнетĕп тĕкĕртен:
Тĕкес тем-ха — тĕкĕ тен?

Тăхăнам-ха тухьяна,
Тевет тавраш тăхăнам —
«Тĕкĕр туя тухĕ-ши?» —
Тесе тăрĕ тахăшĕ.

**Тĕкĕр сире пурнăçра хăçан та пулин тĕлĕнтернĕ-и? Ĕлĕк кашни хĕрача тухья çĕлеме пĕлнĕ. Хĕрачасем, эсир уявсенче тухья тăхăнса, мăй çыххи çакса сцена çине тухса курнă-и?**

## УРИНЕ.



— Урине, Урине,
Уйăхне улттă
Улăштарать урине!
— Уйăхне улттă?
Утмăл улттă!
— Улталамастăр-и?
— Улталамастăп!
Утă уйăхĕччен
Урăх улăштармастăп!

— Урине, Урине,
Уйăхне утмăл улттă
Улăштарать укине!
— Уйăхне утмăл улттă?
Ултçĕр утмăл улттă!
— Улталамастăр-ши?
— Улталамастăп!
Уявччен
Урăх улăштармастăп!

**Урине мĕнле хĕрача-ши?**
**Ялан тум улăштаракан çынна**
**мĕнле сăмахсемпе хаклани вырăнлă?**
**(Тирпейсĕр, капăр, вĕçкĕн,**
**шукăль, якăлти... Ху та хушса кала.)**





## ӲРКЕНМЕН ӲНЕРÇĔ.

Ӳнерçĕ ӳкерет-ӳкерет:
Ӳсен-тăран, ӳпре,
Ӳхлĕм, ӳхĕ, ӳт-пӳ,
Ӳпĕннĕ ӳпле...

Ӳнерçĕ ӳркенмест:
Ӳркев ӳкерет-çке!
Ӳпне ӳксе ӳлин ӳлет —
Ӳпкелешмест ӳнерçĕ.

Ӳкернĕçем ӳсет ӳнерçĕ:
Ӳкерчĕ ӳлĕмлĕх ӳкерчĕк!

**Санăн юратнă ĕç пур-и?**
**«Ӳркев ӳкерет» тенине эсĕ мĕнле ăнланатăн?**



# ХӖРӖХ ХУРПА ХУРАЛÇИ.

Хӗветӗрсен хӗрӗх хур,
Хӗрӗхӗшӗ — хура хур,
Хӑмӑртараххи —
Харсӑртараххи,
Хӑлат хӑраххи —
Хӑна хур.
Хӗрӗх хурӗ — хӑравçӑ,
Хӑна хурӗ — хуралçӑ.

**Хӑна хурӗ килӗнче мар пулин те мӗне пула хӗрӗх хурӑн хуралçи пулса тӑма пултарнӑ-ши?**



## ЧĔВĔЛТИ ЧĔКЕÇ ЧĔППИ.

Чĕвĕл-чĕвĕл чĕвĕлпи —
Чи-чи чипер Чиперпи.
Чарусăр чух — чăрмавлă,
Чылайрах чух — чухлавлă,
Чĕркĕмĕл!
Чечек чĕркемĕ!
Чĕлхи чечен,
Чунĕ черчен —
Чăн-чăн чепчен.
Чĕвĕлти чĕкеç чĕппи —
Чăвашкасри Чиперпи!

**Санăн йăмăку та Чиперпи евĕрех-и?**
**Эсир ăна мĕнле сăмахсемпе йăпататăр?**





## ШУРЛĂХ ШАПИПЕ ШЕТМĔ ШАПИ.



Шурлăх шапипе Шетмĕ шапи
Шетникре шампăртатаççĕ.
— Шӳсе шыçăнтăм! —
Шапăлтатать Шурлăх шапи. —
Шурĕ шутсăр шĕвек!
— Шăппăнрах, шеремет! —
Шăмарать Шыв шапи,
Шыçмака шеллет. —
Шăрăхра — шерпет
Шетникри шĕвек!
Шăллăм, шарламăпăр,
Шанăça шуйхатмăпăр.

Шăпчĕ.
— Шăп-шăпр-рин! — шарлантаратчĕ Шăпчăк.
Шетникре шăппăн-шăппăн шампăртатрĕç
Шурлăх шапипе Шетмĕ шапи.

**Икĕ шапаран хăшĕ хăюллăрах?**
**Вĕсем хăйсене хӳтĕлеме пĕлеççĕ-и?**





## ЫЛТĂН ЫВĂЛ.

Ырлăхкасси ывăлĕ
Ылтăнран ылтăнччĕ,
Ырăран ырăччĕ —
Ытла ырчĕ-ши:
Ыткăнатчĕ — ывтăнчĕ!
Ырханран-ши ывăнчĕ?
— Ы-ы, ывăçăм, ывăçăм!..
Ырансенче ыратĕ...
(Ыратиччен ылатать!)
Ытахальтен ыйхăлать...
Ыталатăп, ынатлатăп,
Ытлашшипех-и ырлатăп,
Ытарлăрах ыйтатăп:
— Ыратмасть-иç, ылтăнăм?
Ытарайми ывăлăм!
Ытах ывçу ыратсан —
Ытларикун ыраттăр!
Ыран-виçминесенче
Ывăлăмăр ырçине
Ырашпăтри ывтăнтăр!



**Санăн юлхава пересси пулать-и?**
**Аçу-аннӳ вырăнĕнче пулсан çакăн пек ачана мĕн каланă пулăттăн?**





## ЭРЕВЕТЛĔ ЭРЕШ.

Эрешменĕм, эккей, эрешменĕм,
Эрнипе эрешсем эрешленĕ!
— Эрешӳ эреветлĕ, элле?
— Эрешменшĕн эрешĕ — элем!

Этеме эрлентерчĕ эрешĕ...
Эрешмен этемлех эрешлесшĕн!

**Сăнанă-и эсĕ, çутçанталăкра хурт-кăпшанкăн та хăйĕн ĕçĕ, тивĕçĕ пур. Эсĕ хăвăн тивĕçне мĕнле ăнланатăн?**



## ЮЛХАВ ЮРИК.

Юманайсем Юрике
«Юратмаççĕ» юриех:
— Юрăхсăр-иç!
— Юлхаврах!
— Юнтарсассăн — ютăрах!

Юри юнап Юрике,
Юптаратăп юриех:
— Юрик юлташ, юрамасть
Юлхавлăха юрама!

— Юрамасть-и, юрать-и —
Юртан юшкăн юлать-и? —
Юрик юри юмахлать.
Юмахĕпе юрăхлах!

— Юсман-кульмак юсаймĕ —
Юрăхсăрах юлам-и? —
Юрик юнтарать юри.
Юрăхлах-тăр-ха юрри!

**Çак юри калаçура чăнни пур-и?**
**Мĕнле шутлатăн, пурнăçра ытарлăн,**
**юптарса калани мĕншĕн кирлĕ?**





## ЯСМĂК ЯШКИ.



Якур Якура
Яхăнне ямасть.
Ян! янăрать Ямаш:
— Янавар! Яраплан!
— Янкăлти япшар ялан!

— Яшăмсем, Якурсем!
Ятуллă-çке ятăрсем!
Ятлав — япăх япала,
Янрататăр-иç яла!
— Ялан ятлаçать Якурĕ!..
— Ямашсен япшар ялкорĕ!
— Ятарласа явăçать!
— Ятарласа ятлаçать!

— Яш-така!
— Япăх-им-ха яштаки?
— Ярханах!
— Яка янах! —
Якур Якура ятлать,
Ятлаççах ятне ярать...

— Якурсем, янташсем! —
Ялкăшаççĕ ямашсем. —
Явкай яшки янтăларăмăр,
Ятлаçтарман ясмăк ятăмăр!

**Хирĕçекенсене ясмăк яшки епле майпа туслă пурăнма пулăшать-ши?**



УДК 821.512.111-1
ББК 84(2=635.1)6-5
К 27

*Кĕнеке ал çырăвĕ ачасемпе çамрăксем валли чăвашла çырнă произведенисен 2019 çулхи конкурсĕнче çĕнтернĕ. Конкурса Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ 2011 çулхи июнĕн 16-мĕшĕнче йышăннă постановленипе килĕшӳллĕн йĕркеленĕ.*

**Карягина М.Ф.**

К 27 Чĕвĕлти чĕкеç чĕппи: сăвăсем / М.Ф. Карягина, ӳнерçи Н.А. Васильева. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2020. — 31 с.
ISBN 978-5-7670-2892-4

Кĕнекене пурĕ çирĕм тăватă сăвă кĕнĕ, кашниех пĕр сас паллинчен пуçланать. Сăвă хыççăн ыйтусем пур. Вĕсем ачасене шухăшлама хистеççĕ, хайлава лайăххах ăнланма пулăшаççĕ.

**УДК 821.512.111-1**
**ББК 84(2=635.1)6-5**

*Литературно-художественное издание*

Для детей младшего школьного возраста

**Карягина Марина Федоровна**

**ЧĔВĔЛТИ ЧĔКЕÇ ЧĔППИ**

**ЛАСТОЧКА-КАСАТОЧКА**

*Стихи*

*На чувашском языке*

Художник *Н.А. Васильева*
Редактор *О.Л. Федорова*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректор *Э.В. Шельтямова*
Компьютерная верстка *Е.Ю. Ермолаевой*

6+ Информаци продукцийĕн палли (436 № ФЗ. 29.12.2010).
Знак информационной продукции
согласно ФЗ от 29.12.2010 г. № 436-ФЗ.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003.
Подписано к печати 20.05.2020. Формат 70×100 1/16.
Бумага мелованная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 2,58.
Тираж 1000 экз. Заказ № 840. Изд. № 40.

АО «Чувашское книжное издательство», 428019, г. Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ООО «Типография «Перфектум».
428000, г. Чебоксары, ул. К. Маркса, 52.

© Карягина М.Ф., 2020
© Васильева Н.А., иллюстрации, 2020
© Чувашское книжное издательство, 2020

**ISBN 978-5-7670-2892-4**

75.00



Чăваш
кĕнеке
издательстви

ISBN 978-5-7670-2892-4